25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
МАРТ
20
ЭРНЕКУН
66 (6091) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Суракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк тухăçлăхпа тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсем, депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракан республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

23. Советски районĕнчи Турай ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз (колхоз председателĕ Ф. Н. Николаев юлташ). [illegible] Вăрлăх хатĕрлесе тырă пĕтĕмпех акма юрăхлă кондициллĕ. Колхоз ялхуçалăх тата транспорт инвентарне пĕтĕмпех юсанă. Уя тислĕк кăларассине плана колхоз ирттерсе тултарнă. 23 центнер кĕл тата 13 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, 60 центнер минераллă удобрени [illegible]

29. Советски районĕнчи «Сеятель» колхоз (колхоз председателĕ Н. А. Андреев юлташ). Суракине акма [illegible] вăрлăхĕсене пурне те сортласа [illegible] Ялхуçалăх инвентарне транспорт инвентарне [illegible] юсаса хатĕрленĕ. Колхоз 2.600 лав тислĕк, 80 центнер кĕл, 28 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ, минераллă удобренисем планпа кĕтартнă чухлĕ турттарса килнĕ. Лашасем пурте лайăх, мăнтăр.

Çуракине отлично ирттересси—ялти комсомолецсен тĕп задачи

Колхозсем, совхозсем, МТС-сем çур кунне уйăхир ĕçĕсем умĕнче тăраççĕ. Часах пĕр ĕç вăхăчĕ çывхарса килет, ялхуçалăх ĕçĕсем пуçланаççĕ.

Вăл ĕçсене кăçал урăхла условисенче, совет халăхĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăрçнă вăхăтра тума тивет. Çавăнпа кăçалхи çураки ытти çулсенчен тĕшрепех уйăрăлса тăрать.

Вăрçă пырать пулин те, эпир тырра кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа акса хăварма тивĕçлĕ. Вăхăтра акса хăварса, пахă тырă çитĕнтерни, унтан ăна тăкаксăр пуçтарса илни—çĕршыва, Хĕрлĕ Çара тырă, аш-какай, сĕт-çу продукчĕсем, промышленность валли ытларах чĕртавар пама май парать. Ку вара Хĕрлĕ Çара нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пулăшни пулать.

Çуракине йĕркеллĕ ирттерме пирĕн пур майсем те çителĕклĕ. Ĕçе йĕркелесси организаторсенчен, комсомолецсенчен, вĕсен пуçарулăхĕнчен килет. Комсомолецсен колхоза пулăшас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлемелле. Вĕсен, вăйшитти çынсен, хăйсен пуçарулă ĕçĕсемпе колхозниксен массине пример кăтартмалла.

Чи малтанах колхоз, совхоз хуçалăхĕнчи пур участоксене те тăхса пухмалла. Çуракине хатĕрленесси мĕнле пынине тĕрĕслемелле. Халь канцелярисенче ларса вăхăта усăсăр ирттерни килĕшмест. ВЛКСМ райкомĕсенче ĕçлекенсем, МТС-сенчи политотдел начальникĕсен помощникĕсем, районри активистсем колхозсене кайса чăн-чăн организаторсем пулса ĕçлемелле. Канцелярисенче хутсем, отношенисем çырса ларни мар, колхозсене, совхозсене, МТС-сене, бригадăсене, звеносене кайса конкретнăй ĕçпе пулăшни пысăк çитĕнӳсем тума пулăшать.

Малта пыракан МТС-сен тата колхозсен опычĕ машинăсене çуркуннехи ĕçсем пуçланиччен юсаса пĕтерме май пурри çинчен калать. Çавăнпа халь тракторсене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсасси мĕнле пынине, вĕсен пахалăхне, хăш МТС-сем, колхозсем кая юлса пынине, вĕсене мĕнле пулăшу кирлине тĕрĕслемелле.

Ку ĕçе республикăри чылай организацисенче пуçăннă. Комсомолăн нумай организацийĕсем колхозсене тивĕçлипе пулăшаççĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытарласа комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене организациленĕ. Бригада членĕсене уйрăм ĕçсем парса тухнă. Ишлей районĕнчи «Автогигант» колхозра вăрлăх сортлас ĕçе А. Ильина комсомолка ертсе пырать. Вĕсем 76 центнер тырă сортланă. А. Михайловăпа Н. Лукина комсомолкăсем пуçарнипе 8 центнер пăрçа вăрлăхне алăпа суйланă. Н. Алексеев, В. Горбунов, Б. Малюшкин пионерсем 8 центнер кĕл, 7 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, М. Осипов комсомолец колхозри ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе ĕçлеме уйăрнă. Халь вăл хăйне панă ĕçе чыслăн пурнăçлать. 21 плуга, сеялкăна тата плугсемпе сӳресен туртисене, пăявĕсене юсаса хатĕрленĕ.

Ишлей МТС-ĕ тракторсене юсаса пĕтернĕ. МТС-ри комсомолецсем ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе пулăшма колхозсене тухса кайнă. М. Толстова комсомолка «Труд» колхозра, комсомолец-агроном М. Степанов юлташ Илек участокĕнче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Комсомолăн республикăри организацийĕсем ялхуçалăх машинисен пайĕсемпе инструменчĕсене пухас тĕлĕшпе чылай ĕçлерĕç. Çамрăксем вăйĕпе 16 пин ытла машина пайĕ пухнă, вĕсене нумайăшне юсанă, халĕ ĕçре усă кураççĕ. Вăрмар районĕнчи çамрăксем 113 тĕрлĕ пай 1513 штука пухса панă. Вăл штутра тракторсене юсама кирлĕ пайсем 608 штукланаççĕ. Машина пайĕсене пухас ĕçе комсомол организацисен тата вăйлатмалла. Пирĕн колхозсем, МТС-сем машинăсене юсама пайсем, инструментсем çителĕксĕр пирки чарăнса ан тăччăр. Вĕсене хамăр алăпа тумалла, вырăнти ресурссемпе туллин усă курас пулать. «Государствăран сахалтарах ыйтас, ăна ытларах парас—çавăн чухне çĕнтерӳ пулĕ», тет М. И. Калинин юлташ. Хăшпĕр çĕрте тупса пуçтарнă машина пайĕсем пĕр-пĕр çĕрте ахалех купаланса выртаççĕ. Вĕсене хăвăртрах складсене, МТС-сене памалла.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, мартăн 5-мĕшпе 20-мĕш хушшинче колхозсенче вăрлăхсене тасатса сортлас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен икăрнелĕхĕ ирттерĕ. Çак вăхăтра комсомолецсемпе çамрăксем колхозсене çĕршер центнер пахă вăрлăх хатĕрлесе парĕç. Красноармейски районри çамрăксем икăрнелĕх пуçланнăранпа 4881 центнер тырă сортланă. Унсăр пуçне пăрçа, тулă, пиçа вăрлăхĕсене алăпа суйланă. Çĕрпӳ районĕнчи «Чуваш. ЦИК» колхозри çамрăксем колхоза 170 центнер, «Вучах» колхозра 120 центнер тырă сортласа панă. Анчах вăрлăх тасатса сортлас тĕлĕшпе икăрнелĕхе комсомолăн Советски районĕнчи организацийĕсем çителĕксĕр хутшăнчĕç. ВЛКСМ райкомĕ (секретарĕ Шувер юлташ) ку ĕç çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман. Комсомол организацийĕсем колхозсене вăрлăх тасатса сортласа парса пулăшма тивĕçлĕ. Ку ĕçе шкулта вĕренекенсене анлăн явăçтармалла.

Хĕрачасене трактор ĕçне тĕрĕслес опыт тӳрре тухрĕ. Трактористкăсем акнă чухне те, уборкăра та тăрăшса ĕçлерĕç. Çавăнпа хĕрачасенчен квалифицированнăй кадрсем хатĕрлессине тĕп вырăна хумалла.

Комсомол организацийĕсен туртăм тĕлĕшĕ çинчен манма юрамасть. Лашасем тутă, мăнтăр, вăйлă пулччăр тесе, халех тăрăшса ĕçлемелле. Çавăн пекех кӳлмелли хатĕрсене те тăлтах хатĕрлесе хумалла. Калинински районри Буденный ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем тĕрĕс тунă. Унта комсомолец А. Ананьев юлташ 8 лаша, Коля, Ваня Лаврентьевсем, В. Прокопьев, В. Арсентьев, Матрена Григорьева çамрăксем кашниех 7—9-шар лаша пăхма тытăннă. Вĕсем хăйсен лашисем çуракинче ывăнмалла мар тăвассишĕн тăрăшаççĕ, вăхăтра апат параççĕ, шăвараççĕ, тасатаççĕ.

Ака вăхăтĕнче минераллă удобренисем, горючисем нумай кирлĕ пулаççĕ. Вĕсене турттарма çуна çулĕпе авантарах. Çавăнпа турттарса килмеллисене халех турттарса килсе хурас пулать. Ку тĕлĕшпе ĕçлеме пĕр-ик хастарлă комсомолеца е çамрăка уйăрма пулать.

Кăçал ака вăхăтĕнче те, уборкăра та хĕрарăмсене ытларах ĕçлеме лекет. Вĕсене ĕçе тухма условисем туса памалла. Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем халех ачасен яслисене, площадкисене организацилесси çинчен шухăшласа пăхмалла, ку тĕлĕшпе колхозсене пулăшмалла. Кашни ялтах учительницăсем, вожатăйсем, комсомолкăсем пурах. Вĕсене ку ĕçе анлăн явăçтармалла. Пĕчĕк ачасемшĕн тăрăшасси—комсомолăн ĕçĕ.

Комсомол организацисен политикăллă-массăллă ĕçе çуракине отлично хатĕрленсе ирттерес тĕллевпе çыхăнтарса туса пымалла. Агитаторсем, чтецсем, беседчиксем уйрăм колхозниксем патне кайса çӳреччĕр. Вĕсем кашни колхозника фронт валли, çĕнтерӳ валли пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме кирлĕ çинчен ăнлантарччăр. Çуркуннехи ĕçсем кăçалхи тырпулăн тухăçлăхне татса парĕç. Çавăнпа çуракине отлично хатĕрленсе ирттерер.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 18-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 18-мĕшĕнче фронтра нимĕнле пысăк улшăнусем те пулман.

Мартăн 17-мĕшĕнче нимĕçсен 44 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 16 самолет çухалнă.

* * *

Мартăн 17-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 6 танкне, 55 орудине, [illegible] пулеметне, 12 точкине, 53 [illegible] 185 автомашинине, [illegible] пĕтерсе тăкнă [illegible] 7 автоцистернине пĕтерсе тăкнă [illegible] 2 батальона çити салтакне [illegible].

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче пирĕн чаçсем [illegible] 5 кун хушши çапăçса, нимĕçсен 34 ДЗОТ-не, 116 блиндажне, 6 танкне, 3 орудине, [illegible] 3 танк, 13 орудии, 35 пулемет тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Противникăн вилнисене шутласан кăна, салтакĕсемпе офицерĕсем 3.000 çынна çити пĕтнĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехотин 2 батальонĕ 3 танк пулăшнипе пирĕн контратака тума пăхнă. Пирĕн пехотинецсем, хамăрăн танкистсемпе пĕрле пулса, противника каялла сирсе пăрахнă, ăна пысăк çухатусем кӳнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 ытла вилли тата нимĕçсен çĕмрĕк танкĕ выртса юлнă.

* * *

Усачев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Калинин фрончĕ), халăх пурăнакан пĕр пысăк пункт районĕнче противника хирĕç темиçе кун хушши вăйлăн çапăçса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.230 çынна пĕтерсе тăкнă. Пирĕн войскăсем тытса илнĕ трофейăсем хушшинче—11 пулемет, 2 оруди, 3 миномет, снарядсемпе минăсен складĕ пур. Тăшманăн 28 ДЗОТ-не çапса аркатнă, 18 станковăй пулеметне тата танкисене хирĕç пемелли 2 орудине пĕтерсе тăкнă.

[illegible] лăн пеме пуçланă. Каялла чакнă чухне гитлеровецсем минăсен хирне пырса лекнĕ. Минăсем çине пырса лекнипе салтаксем ларса пыракан 4 автомашина сирпĕнсе кайнă.

* * *

Нимĕçсен 113-мĕш пехотнăй дивизийĕн 260-мĕш полкĕнчи 9-мĕш ротăн тыткăна лекнĕ лейтенанчĕ Ганс Гофакер çапла каласа панă: «Пирĕн дивизие иртнĕ çулти сентябрь уйăхĕнче аркатса тăкнăччĕ. 48 сехет хушшинче дивизин тĕп личнăй составĕнчен 60 проценча çити пĕтрĕ. Дивизин юлашкийĕсене йĕркуннне серб партизанĕсене хирĕç кĕрешме Югославие куçарнăччĕ. Югославире эпир пурăннă çĕрти çынсем май пулсанах пирĕн çине вăрттăн тапăнса вĕлерме тăрăшатчĕç. Партизансем пĕрмаях пыр-пыра тапăннипе эпир халран кайрăмăр. Çĕрле эпир урама тухма та хăраттăмăр. Мĕншĕн тесен унта нимĕç салтакĕсене час-часах вĕлеретчĕç. Пирĕн пĕр часовоя постра тăнă чухне каласа панă: «Унта мĕн курса илни мана хуйăха ӳкерчĕ,—тесе каласа парать Гофакер.—Урамсенче арçынсем пачах курăнмаççĕ. Хулара выçлăх пуç пулса тăрать. Декабрь уйăхĕнче, сăмахран Базель хулинче, карточкăсем тăрăх çу тавраншĕсем пĕр грамм та паман. Халăхăн шухăш-кăмăлĕсем питех те йывăр. Пурин сăн-питĕнче те вĕсем ӳсалланса ывăнса çитни палăрать».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Грюнемюллер хăйĕн аппăшĕ-йăмăкĕсем патне çапла çырнă: «Ан хăраса ӳкĕр, ан кӳренĕр, анчах та эпĕ Российăра пирĕн мĕн тӳсме лекни çинчен çырса пĕлтеретĕп. Эпир пĕр пĕчĕк ялта вырнаçса тăрат тăмăр, унтан пирĕн хăвăрт тухса шăвăнма лекрĕ. Пире икĕ кун хушши хыçран йĕрлесе, хăваласа пычĕç. Пенĕ сасă пĕр минутăлăха та чарăнмасть... Пире ĕнтĕ никам та, нимĕн те çăлса хăвараймасть, эпир шанăçа çухатрăмăр...»

Мартăн 19-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 19-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле пысăк улшăнусем те пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем противникăн 3.500 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн стрелковăй часть, вăйлăн çапăçса, нимĕçсене халăх пурăнакан икĕ пунктран хĕссе кăларнă тата 2 оруди, 8 миномет, 6 пулемет, боеприпассен 2 складне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 120 çын вилсе юлнă. Пирĕн часть туртса илнĕ трофейăсем хушшинче—8 оруди, 7 миномет, 12 пулемет, минăсен складĕ, 20.000 ытла патрон тата груз тиенĕ 10 лав. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Противник хирĕç тăнине сирсе пăрахса, пирĕн боецсем вăйлă çирĕплетнĕ пĕр пункта (Калинин фрончĕ) йышăнса илнĕ. Нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Пирĕн боецсем 25 пулемет, 2 миномет, 2 радиостанци тата нумай винтовкăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть, халăх пурăнакан 2 пунктшăн кĕрешсе, противникăн тĕрлĕ калибрлă 80 орудии, 126 автомашина, 4 автобус, пĕр бронемашина, 4 трактор тата прицепсем тытса илнĕ. Ручной пулеметсенчен тата танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен персе, нимĕçсен икĕ транспортнăй самолетне ӳкернĕ.

* * *

Пирĕн войскăсем хупăрласа илнĕ халăх пурăнакан пункта кĕрсе кайма хăтланса, гитлеровецсем «психикăллă атака» тунă. Нимĕçсен ӳсĕр салтакĕсем пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе тăрса пирĕн подразделени çинелле утса пынă. Совет боецĕсем противника çывăхах пырса çитме май панă та вăйлăн пеме пуçланă. Вилнисемпе аманнисене 400 çын ытла хăварса, нимĕçсем нимĕн йĕркесĕр каялла чакнă.

* * *

Нимĕçсен Хĕвеланăç фронтĕнче çĕмĕрсе тăкнă 17-мĕш артиллери полкĕн штабĕн ĕç хучĕсем хушшинче 17-мĕш пехотнăй дивизин разведкăпа контрразведка отделĕн февралăн 10-мĕшĕнче кăларнă распоряженийĕ тупнă. Унта çапла каланă: «...Войскăсем вырнаçса тăракан вырăнсенчи мирлĕ халăха тăлăшпах тĕрĕслесе тăрас пулать. Иккĕлентерекен çынсене партизансене тыткаланă пек тыткалас пулать, тепĕр майлă каласан, вĕсене персе пăрахмалла. Хăйсем пĕр-пĕр вырăнта мĕншĕн пурăннине çителĕклĕ таран ĕнентерсе пама пултарайман çынсене, вĕсем миçе çулти тата арçынна хĕрарăмне пăхмасăрах, иккĕлентерекен çынсем тесе шутламалла».

Нимĕçсен командованийĕ кунран кунах вăйланса пыракан партизанла движение пусарса лараймасть. Çавăнпа та Гитлерăн урса кайнă бандичĕсем, çӳлте асăннă документ кăтартса панă тăрăх, советăн мирлĕ гражданĕсене пурне те «вĕсем миçе çулти тата арçынна хĕрарăмне пăхмасăрах», пĕтерсе тăкма шутлаççĕ. Пичех те паллă ĕнтĕ, совет гражданĕсем хăйсем пĕр-пĕр вырăнта пурăнни çинчен кирек мĕнле ăнлантарса панине те нимĕç юнĕрнĕсем «çителĕксĕр» тесе йышăнма тата вăл гражданина персе пăрахма пултараççĕ. Çапла вара, гитлеровецсем вăрçă туса пымалли пур йĕркесене те пăснипе, вĕсем хӳтлĕхсĕр мирлĕ халăха хирĕç, çав шутрах хĕрарăмсемпе ачасене хирĕç те, вăрçнине çак документ тепĕр хут кăтартса парать. Çавăн пек тискер ĕçсем туни гитлеровецсем вăйлине мар, вĕсем вăйсăррине кăтартса панине ĕнентерсе тăма та кирлĕ мар.

* * *

Нимĕçсен 35-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 111-мĕш пехотнăй полкăн 5-мĕш ротинчи вилнĕ фельдфебель Цигер çырса пынисенчен хăшпĕр вырăнсене илсе кăтартатпăр: «...Пирĕн умра гусеницăсем кĕмсĕртетни илтĕнет. Вĕсем вырăсен танкĕсем. Пирĕн противотанковăй артиллери тăтăшах персе тăрать, снаряд хыççăн снаряд ывтăнать, анчах танксем ним çĕмĕрĕлмесĕрех малалла таппăнса пыраççĕ. Вырăсен танкĕ манран 10 метрта кăна ĕнтĕ, вăл танксене хирĕç пемелли пупă çине пырса кĕрсе ăна, ачасен вылямалли япалине ывăтнă пекех, аякалла ывăтса ярать. Пĕр чарăнса тăмасăрах вăл малалла ывтăнать. тупăсемпе пулеметсенчен перет. Иккĕмĕш танк килсе çитет. Ун хыççăн каллех тепри тата тепри килеççĕ. Эпир пĕр хӳтлĕх патĕнчен тепĕр хӳтлĕх патнелле таратпăр. Танксем хыççăн вырăсен пехоти килсе çитет, казаксем килсе çитеççĕ. Пире сарайĕнче пытанса юлма май килчĕ. Эпир утă ăшне кĕрсе выртатпăр. Эпĕ пĕрмаях хушăкран пăха-пăха илетĕп. Вырăссем ака яла пырса кĕчĕç. Пур çĕрте те пирĕн салтаксем тăкăнаççĕ. Хамăр ротăран эпĕ никама та курмастăп ĕнтĕ.. Тĕлĕнмелле майпа çеç çăлăнса юлма май килчĕ».

* * *

Вăрçă вăхăтĕнче Киргизири ĕççыннисем СССР оборонин фондне 32 миллион тенкĕ укçа тата 82.242 пин тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсене хывнă. Кунсăр пуçне оборона фондне 6.987 центнер аш-какай, 23.585 центнер тырă, усламçу, сало, пыл, типĕтнĕ улма-çырласем тата ытти продуктсем нумай панă.

Вăрлăхсем, машинăсем хатĕрлетпĕр

СОВЕТСКОЕ. Нумаях пулмасть районра ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракансен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Вăл канашлура Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозсен представителĕсем те пулчĕç. Кăçалхи çуракине нихăçанхи пек мар лайăх тата кĕске срокра ирттерессишĕн Советски, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозсем социализмлă ăмăртăва тухса хăйсем çине тапăклă обязательствăсем илчĕç.

Çак канашлу иртнĕ хыççăн районри колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе нумай хут вăйлатрĕç. Качикассинчи «Машина» колхоз 4—5 кун хушшинче акмалли тырăсене 100 процентчĕпех тасатса, сортласа хучĕ. Кантăр тата клевер вăррисем колхозăн акмалăх çитмен. Вĕсене кӳршĕри колхозсенчен илчĕ, акма хатĕрлесе хучĕ.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç колхозра тимĕрçĕ çук пирки чарăнса тăмарĕ. Колхоз вĕсене юсама хăех вăй тупрĕ. Халĕ 2 касăллă 12 плуга, пĕр касăллă 18 плуга пурне те юсанă, сарайсене вырнаçтарса лартнă. Икĕ сеялка, тимĕр тата йывăç сӳресем 16, вĕсене те юсаса çитерчĕç.

Колхозăн старши конюхĕ Илларионов юлташ, кӳлмен тумалли ĕçĕ нумай пулсан та, лаша кӳлмелли сӳмсен пăявĕсене юсас ĕçе хăй çине илчĕ. Хăйĕн тĕп ĕçне лайăх туса пынипе пĕрлех, вăл çĕрне-кунне пăлмесĕр ĕçлесе, колхоза 28 йĕвен, 12 сӳмсен, 17 йĕнерчĕк юсаса пачĕ.

Урапа тавраншĕсене юсама колхоз звено организацилерĕ. Звенора платник ĕçне пĕлекен колхозниксем тăраççĕ. Мартăн 15-мĕшĕ тĕлне вĕсем 22 урапа юсаса ĕлкĕрме сăмах пачĕç. Хăйсен сăмахне вĕсем чыслăн пурнăçа кĕртрĕç.

Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕнчи ĕçсене чыслăн пурнăçласа, «Машина» колхоз малти вырăна тухрĕ. «Кăçал та, халĕ çуракине тухма тивĕçлипе хатĕрленсе, пысăк тухăçлă тырпулшăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме сăмах паратпăр»,—тет колхоз председателĕ Майков юлташ.

С. ИЛЬИН.

Планпа кăтартнинчен малтан

Комсомольски МТС-ра ĕçлекенсен коллективĕ фронта хăйĕн паха ĕçĕсемпе пулăшать.

Асеинов юлташ ертсе пыракан трактор бригади тракторсене планпа кăтартнинчен 2 эрне малтан юсаса çитернĕ.

Кольцовпа Степанов стахановецсен бригадисем те тракторсене срокчченех юсарĕç. Халĕ вĕсем комбайнсен моторĕсене юсама тытăннă.

Тракторсене юсанă чухне уйрăм рабочисем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ.

Воронцов, Краснова трактористсем кулленхи нормăна 150—200-шер процент тултараççĕ. 60 çулти слесарь Левин юлташ хастарлă ĕçленине палăртмалла. Вăл, хăй лайăх ĕçленипе пĕрлех, çамрăк слесарьсене пулăшма тăрăшать.

МТС-ри çамрăк токарь Наумова юлташ Хĕрлĕ Çара кайнă икĕ çын вырăнĕнче ĕçлет. Вăл халь—токарь тата машиновед. Çав вăхăтрах вăл ĕç хыççăн çамрăк хĕрачасене трактор ĕçне вĕрентет. Нумаях пулмасть çамрăк хĕре Константинова юлташа вăл машиновед пулма вĕрентсе кăларчĕ.

Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сӳтсе-яваççĕ

Республикăри трактористсемпе трактористкăсем Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сӳтсе-яваççĕ, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илеççĕ.

Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем Мамутина, Иванова, Ульянова, Самилкин, Ефремов юлташсем кашни тракторпа 900 гектар сухаламалла тата çунтармалли, сĕрмелли япаласене нормăпа панинчен 7 процент перекетлеме обязательство илнĕ.

Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем Куславкка районĕнчи трактористсене социализмлă ăмăртăва чĕнсе, кашни тракторпа 400 гектар сухалама йышăннă. Çавăнпа пĕрлех çунтармаллипе сĕрмелли япаласен 5 процентне перекетлеме пулнă. Халь трактористсен курсĕнче вĕренекенсем «хорошо» тата «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухма сăмах панă.

Улатăр районĕнчи МТС Кувакинăри МТС-па ăмăртать. Унти трактористсемпе трактористкăсем кашни тракторпа 1200 гектар сухалама обязательство илнĕ. Çуркуннехи кун çулталăка тăрантарать тенине шута илсе, вĕсем çуракине кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа, агротехникăн пур правилисене те пăхăнса туса ирттерме йышăннă.

Сĕнтĕр районĕнчи трактористкăсемпе трактористсем 1942 çулта уйри ĕçсене планпа кăтартнă вăхăтра тата отлично ирттерме пулса обязательство илнĕ. Кашни тракторпа 500 гектар сухалама, çунтармалли тата сĕрмелли япаласене 15 процент перекетлеме пулнă. Çав вăхăтрах вĕсем машинăсене таса тытма, тирпейлĕ усрама сăмах панă.

Элĕк районĕнчи 20 трактористка, ăмăртăва хутшăнса, кашни тракторпа планпа кăтартнă 340 гектар вырăнне 410 гектар сухалама, çунтармалли тата сĕрмелли япаласене 15 процент перекетлеме пулса хăйсем çине обязательство илнĕ. Вĕсем тракторсене юсама панă укçаран 5 процентне перекетлеме пулнă.

Вăрнарти МТС Йĕпреç МТС-не социализмлă ăмăртăва чĕннĕ. МТС-ри бригадăсем тата бригадăсен членĕсем хушшинче те ăмăртăва йĕркеленĕ. Вĕсем хăйсен обязательствисенче тракторсен паркне кăтартуллă йĕркелеме, машинăсене юсама кирлĕ пайсене малтанах тупса хума, кая юлса пыракансене пулăшма, çапла майпа тракторсене пĕр сехет те, пĕр минута та ĕçсĕр лартмалла мар тума йышăннă. Кирек мĕнле ĕçе те хăйсен вăйĕпе тăвассине тĕп вырăна хума пулнă. Çуракинче трактор туртакан кашни сеялкăпа 150 гектартан кая мар тырă акма тата кашни гектар пуçне 500 грамм çунтармалли япала перекетлеме сăмах панă. Çавăн пекех тракторсене юсама панă укçаран кашни трактор пуçне 200-шер тенкĕ перекетлеме йышăннă.

Çак кунсенче МТС çумĕнче организациленĕ курсран 71 тракторист вĕренсе тухать, вĕсен хушшинче 39 хĕрача. Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн МТС тата 80 çынна вĕрентсе кăларма обязательство илнĕ.

Тăвай районĕнче те Орджоникидзе крайĕнчи трактористкăсен чĕнĕвне сӳтсе-яваççĕ. Унти трактористсемпе трактористкăсем машинăсене пĕр минута та ĕçсĕр лартмалла мар тума, кашни тракторпа планпа пăхнă 543 гектар вырăнне 600 гектар сухалама пулса обязательство илнĕ.

Л. МИХАЙЛОВ.
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

—О—

„Пионер Чувашии" танк тума

ЕТĔРНЕ. Районри шкулсенче Етĕрнери пионерсем «Пионер Чувашии» ятлă танк тумашкăн укçа-тенкĕ пухма чĕнсе каланине сӳтсе-яваççĕ.

Урапакассинчи пуçламăш шкулта вĕренекенсем пуху хыççăнах 55 тенкĕ, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта—100 тенкĕ ях ăн пухрĕç. Уйрăм вĕренекенсем Кольцов, Максимов т. ыт. те 4—6-шар тенкĕ панă.

Çĕнĕ Етĕрне вăтам шкулĕнче 730 тенкĕ, Палтай вăтам шкулĕнче 500 тенкĕ ытла пухнă. Шумилова, Петров учительсем танк тума 20-шер тенкĕ панă.

И. Т.

—о—

МОПР членĕсен пулăшăвĕ

Париж Коммуни тата МОПР кунне Шупашкарти эрех заводĕнчи рабочисем МОПР ячейкин ĕçне лайăхлатнипе кĕтсе илчĕç.

Заводри рабочисем пурте тенĕ пекех МОПР членĕнче тăраççĕ, унта активлăн хутшăнаççĕ.

Мартăн 15-мĕш тĕлне МОПР членĕсем çулталăк хушшинче пухăнмалли член укçин 74 процентне парса татнă.

Мартăн 18-мĕшĕнче пулнă пухура МОПР членĕсем госпитальсенче выртакан аманнă боецсем валли укçа пухма йышăннă. Çавăнтах вĕсен 185 тенкĕ укçа пухăннă.

Т. К.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Хресченсем совет летчикĕсене пулăшрĕç

ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, мартăн 17-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Летчик-капитан Якунинпа унăн штурманĕ сержант Козьминых боевой задачăна ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн хăйсен базине таврăннă. Çул çинче вĕсен самолечĕ зенитнăй артиллерирен вăйлăн персе тăнă зонăна лекнĕ те сиенленнĕ. Машина вĕçеймн пулнă, фашистсен куçĕ умĕнчех çĕрелле тирĕнме тытăннă. Капитан Якунин вăрман урлă вĕçсе каçса машинăна меллĕн çĕр çине антарнă. Сержант Козьминых пулăшу ыйтма яла кайнă. Хресченсем совет летчикпе ăшшăн йышăннă. Вĕсем ăна ку вырăнта йĕри-таврах нимĕç войскисем тăни çинчен каласа пĕлтернĕ.—Анчах эсир ан пăшăрханăр, сире эпир пăрахас çук. Хамăр çынсем—çăлăпăр,—тенĕ вĕсем.

Хресченсем ушкăнпах самолет ансаларнă вырăна пырса çитнĕ те самолета шанчăклăрах, уллахрах çĕрелле куçарнă, курăнмалла мар пытарнă. Нимĕçсем совет самолетне шыраса темиçе кун хушши çав округ тăрăх чупнă. Вĕсем машина вырнаçнă вырăна та темиçе хутчен те çитсе пăхнă. Хресченсенчен — хĕрарăмсемпе ачасенчен ыйтнă, анчах пĕрн те совет машинине курни çинчен калакан пулман: курман, илтмен, пĕлмен.

Çав вăхăтра капитан Якунинпа сержант Козьминых хăйсен самолетне юсаса çитернĕ. Ку ĕçре вĕсене каллех колхозниксем пулăшнă. Юсаса çитернĕ самолета сарлака уя илсе тухнă та вăл вара хăвăрт сывлăша çĕкленнĕ.

А. ВИКТОРОВ.

Партизансен „Правда“ редакцине янă çырăвĕ

Ленинград облаçĕн икĕ районĕнчи партизансенчен, нумаях пулмасть кăна Ленинград валли хĕрлĕ обоз организациленĕскерсенчен, «Правда» редакцине çакăн пек çыру килнĕ:

«Хаклă юлташсем! Пирĕн партизансен бригади ĕнтĕ 8 уйăх хушши тăшманăн шалти тылĕнче нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешет. Пирĕн бригадăн боевой ĕçĕсене пула, тăшманăн çар чаçĕсем çине тапти-сыпписĕр пыра-пыра тапăннине пула, тăшмана хамăр куçа курăнсанах пим хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынине пула, фронт тăрăх 120 километр, фронт линийĕнчен шалалла 80 километр сарлакĕш территори çинче тĕрĕссипе ĕнтĕ каллех совет влаçĕ туса хунă. Эпир 9600 квадратлă километр çĕр лаптăкне контроль туса тăратпăр, нимĕçсем çав вырăна ура ярса пусма та хăраççĕ. Фашистсене карательнăй экспедицисем яни те, лăпкă ялсене сывлăшран вĕçсе пырса тапăнни та, нимĕн те пулăшаймасть. Вĕсен тылĕнче совет районĕсем пурăнаççĕ-пурăнаççех. Çав районсем пулăшса пынипе партизансем хамăрăн тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç вăйлăнрах та вăйлăнрах çапăçаççĕ.

Сире, хаклă юлташсем, партизанла боевой салам яратпăр. Шанчăклах тăрăр: хамăрăн çĕр çинче хăçан та хăçан пĕр нимĕç те юлмĕ, çавăн чухне тин партизансем хăйсен хĕçпăшалĕсене хурĕç.

Тăшманăн тылĕ, 1942 ç. март».

Çыру çине партизансен бригадин командирĕпе комиссарĕ тата Н-ски районра совет влаçне çĕнĕрен туса хурас тĕлĕшпе ĕçлекен группăн председателĕ алă пуснă.

(ТАСС).

Литвиновпа Галифаксăн Нью-Йоркри выступленийĕсем

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Мартăн 16-мĕшĕнче Литвинов юлташ «Нью-Йоркăн экономикăллă клубĕнче» пулнă йышăнура сăмах тухса каланă. Çав йышăнура Англин США-ри посолĕ лорд Галифакс, Китайăн посолĕ Ху Ши тата ыттисем те тухса каланă. Рузвельт çав йышăну ячĕпе послани янă. Рузвельт хăйĕн посланийĕнче пĕрлешнĕ çĕршывсен паллă представителĕсене саламланă.

Литвинов юлташ çакна кăтартса панă: унăн выступленийĕн тĕллевĕ—Совет Союзĕ пĕтĕмĕшлĕ ĕçпе тунă питех те пахă çиленĕçсене çутатса парасси пулать, тенĕ. Гитлерла çарсене хирĕç тăхăр уйăх хушши кĕрешсе, Хĕрлĕ Çар Гитлера йĕпта та пулин урăх çĕрте мĕнле те пулин пысăкрах операцисем тума чăрмантарчĕ, тенĕ Литвинов юлташ. Гитлерăн çарне çĕнтерекенни никам та çук текен юмаха Хĕрлĕ Çар пĕтерсе тăкрĕ, Гитлерăн çарне çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çавтерри пысăк çухатусем тÿстерчĕ тата Германи çарĕпе тылĕн шухăш-кăмăлне хавшатрĕ.

«Эпир Германи çарне инçех хăвалаласа яман-ха,—тенĕ Литвинов юлташ.—Анчах та çакă питех те паллă пулса тăрать: пирĕн вăйсене татах та темиçе хут ÿстерме май пулнă пулсан е Германин вăйĕсене ытти фронтсене куçартармалла туса çапăçласа янă пулсан, Гитлерăн çарĕсене каялла татах та ытларах, Германи чиккине çитиех, Берлина çитиех тата унтан та аяккарах хăваласа яма май пулнă пулĕччĕ. Германи çарне мĕн чухлĕ ытларах каялла хăваласа яратпăр, унăн речĕсенче çавăн чухлĕ ытларах йĕркесĕрлĕхсем пулаççĕ, çавăн чухлĕ ытларах пăлханусем пулаççĕ, оккупациленĕ çĕршывсенчи, Гитлера курайман çĕршывсенчи антипатилĕх çавăн чухлĕ вăйлăрах пулать. Çав çĕршывсенчи халăхсем татăклă кĕрешĕве тухма сигнал кĕтсе тăраççĕ. Çав халăхсем йышăнакан пĕртен-пĕр сигнал вăл—Германи çарне чакарасси тата вăйлăн çапса аркатни пулса тăрать».

Ирĕклĕхе юратакан халăхсем гитлеризма хирĕç пĕрле кĕрешесси çинчен калаçса, Литвинов юлташ пĕтĕмĕшлĕ заявленисем тума ытларах кăмăлланинчен сыхланма, юлашкинчен çапах та эпир çĕнтеретпĕр, ырăлăх хăвачĕ пурĕпĕрех çĕнтерет тесе, пĕтĕмĕшлĕ заявленисем тума ытларах кăмăлланинчен сыхланма кирлине асăрхаттарнă. «Манăн шутпа,—тенĕ малалла Литвинов юлташ,—тĕнчĕл держависен тĕп пружини пулса тăракан Гитлера çĕнтермелли практикăллă çулсем халĕ ĕнтĕ малтанхи хут уççăн тухса тăчĕç. Мĕн пуласси çинчен хăраса тăмасăр ĕçе хĕтолăн тупăсан май килмест. Çĕнтерÿ тумалли практикăллă çулсем çавăн пек хăюллăхпа çыхăнса тăраççĕ. Гитлер Норвегие тапăнса кĕнĕ чухне мĕн пуласси çинчен шухăшласа тăмасăр сиксе ÿксе чылай пысăк çĕнтерÿсем тумарĕ-и вара? Кĕтсе тăмалла политикăпа тытса пырса, хамăрăн тĕллевсене пурнăça кĕртессипе нимĕн те тумасăр тăрса тата пĕр усăллă вăхăт ыра сăн тепрем аларан вĕçертсе, эпир татах та пысăк хăрушлăх умне тухса тăрапăр. Сăмах май каласан, мĕн пуласси çинчен хăраса тăмасăр ĕçе хăюллăн тусан, мĕнле те пулин ăнăçу тума шанчăк пурах, çавăн пек [illegible] те тумасăр ларни чăн-ахах ĕçре нихăçан та ăнăçу патне илсе пымасть.

«Вăрçăн калăпĕ çĕнĕ çулĕ пире çĕнтерÿ курет, тесе шухăшлама пăхатпăр эпир,—тенĕ юлашкинчен Литвинов юлташ.—Эпир вăхăта хамăрăн союзниксем пулма чĕнетпĕр. Анчах та вăхăт кил-ас ... те кĕрешме хатĕр тăракан ултавлă союзник пулса тăрать пек туйăнать мана. Кĕтмелли политикăна тытса пырса, эпир çав вăхăт хушшинче тăшман тума пултарнинчен ытларах резервсемпе хĕçпăшалсем тума пултарсан, противник çав вăхăт хушшинчех нимĕн тумасăр ларатăп тесе тупа тăвас пулсан, паллах, çакă вăл гитлеризма хирĕç кĕрешекен çĕршывсемшĕн питех те усăллă пулнă пулĕччĕ. Анчах противник апла тума памасть. Вăл хăй малалла куçса пынипе, ăна чăрмантарсем туянма çĕнĕрен çăлкуçĕсем тупма май паракан çĕнĕ çĕршывсем тытса илнипе çĕнĕрен татах та нумай миллионшар çынсене чуралăха кĕртсе ÿкернĕ çĕрте усă курма, хăйне валли—çакă вăл пулма та пултарать—çĕнĕ союзниксем тупнă çĕрте усă курма пултарать. Кун пек чухне тăшман, эпир ушкăнта хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен темĕнле вăйлă пулсан та, пирĕнпе танлашма пултарать».

Англи посолĕ лорд Галифакс хăйĕн сăмахĕнче уйрăмăнах çакăн çинчен каланă: «Этемлĕх историйĕнче пирĕн çĕршывсем хушшинчи союз пек стихийăллăн пулса тăнă союзсем нихăçан та пулман. Эпир хамăрăн пĕтĕмĕшлĕ тăшмана çапса аркатас тесе чăн-чăн юлташсем пек пĕрле килĕштерсе ĕçлеме пĕрлештрĕмĕр. Çак пĕрлĕхлĕ ĕçе кашни çĕршыв мĕнле хутшăнассине географиллĕ факторсем палăртса параççĕ».

Китай пирки чарăнса тăрса Галифакс: Китайăн кĕрешĕвĕ пĕрлĕхлĕ ĕçĕн пайĕ пулса тăрать. Китай кĕрешÿре кăтартнă паттăрлăха пула, эпир Китай умĕнче парăмлă»,—тенĕ.

— «Юлашки тăхăр уйăх хушшинче,— тенĕ малалла Англи посолĕ, — темиçе пин мильăна тăсăлакан фронтра Россия хăй çине Германин çарĕ пыра-пыра çапнисене пĕтĕмпех тÿссе ирттерчĕ. Хăйĕн çарĕсен паттăрлăхне пула, Германи тылĕнче кĕрешекен хăйĕн партизанĕсен ĕçĕсене пула, совет летчикĕсем паттăррăн кĕрешнине пула, граждăнла халăхсен тĕлĕнмелле пысăк чăтăмлăхне пула, Совет Российи пире çурхи те çавтерри паха пример кăтартрĕ».

Лорд Галифакс малалла çапла каланă: союзниксем оборонăллă стратегипе чарăнса тăма шутламаççĕ. Ун пек оборонăллă стратеги Гитлерпа унăн союзникĕсене нихăçан та пуçĕпех çапса аркатма май пама пултараймасть. Çурхи кунсенче çуллахи вăхăтра питех те пысăк паттăрлăхпа чăтăмлăх кирлĕ пулать. Эпир нумай çухатусем турăмăр, эпир татах та ытларах çухатусем тума пултаратпăр. «Анчах çапах та, — тенĕ юлашкинчен Галифакс,—противник хăйĕн çар вăй-хăвачĕпе промышленность вăй-хăватне ÿстерес тĕлĕшпе вĕçне тенĕ пекех çитрĕ, çав вăхăтрах пирĕн пĕрлешнĕ çĕршывсен аллинче çарпа промышленноçăн питĕ пысăк резервĕсем, çавăн пекех тата нумай йышлă союзниксем пур. Вĕсен хисепне оккупациленĕ, чуралăха кĕрсе ÿкнĕ çĕршывсенчи халăхсем те кĕреççĕ. Пирĕн нихăçан та çакна манмалла мар: эпир вăрçăра çĕнтерсен, пирĕн мире те çĕнтерсе илмелле».

Китай посолĕ Ху Ши хăйĕн выступленийĕнче çакна çирĕплетсе каланă: совет çарĕ тата мĕнпур совет халăхĕ тăшмана хирĕç геройла ăнăçлăн тăни Европăри вăрçăн характерне тĕпренех улăштарчĕ, тенĕ.

Фронтпа çĕршыв пирĕнтен ытларах та ытларах вăрман ыйтаççĕ

Вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ çителĕклĕ памалла

СЕНТЕР. Районри чылай колхозсем вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçсенче тăрăшса ĕçлеççĕ. Оринино ялсоветĕнчи «Красная Чувашия» колхоз вăрман турттарас плана ытлашшипех тултарчĕ. Ку ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхоз та вăрман ĕçĕнче лайăх ĕçлет. Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхоз вăрманта ĕçлеме уйрăм бригада организациленĕ. Бригада членĕсенчен А. Овчинникова, П. Баранова юлташсем хăйсен кулленхи нормисене яланах ирттерсе тултараççĕ.

Анчах районра вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçсене хакламан колхозсем те пур-ха. Сăмахран, Ярославка ялсоветне кĕрекен колхозсем вăрманта ĕçлеме çынсем те, лашасем те çителĕклĕ уйăрман. Атапай ялсовечĕн председателĕ Садовникова юлташ вăрман хатĕрлев ĕçне единоличниксене хутшăнтарман.

С. НАЛИМОВ.

Лайăх ĕçлекенсем

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Хальхи вăхăтра çĕршыва йывăç питех те кирлине ăнланса илнĕ колхозсем вăрман хатĕрлес тата турттарас ĕçсенче пример кăтартса ĕçлеççĕ. Пирĕн районри «Комсомолец» тата «14 лет Октября» колхозсем вăрман хатĕрлес плана мартăн 15-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарчĕç. «КрасноеИменево» колхозран вăрманта уйрăм бригада ĕçлет. Ăна колхозри активлă комсомолец В. Козлов юлташ ертсе пырать. Бригада членĕсем Е. Емельянов, Д. Федоров юлташсем кулленхи заданисене ăнăçлăн тултарса пыраççĕ.

А. КОСОЙКИН.

Çамрăксен стахановла бригади

ИШЛЕИ. Ишекри Сталин ячĕпе тăракан колхозран вăрман хатĕрлевĕнче çамрăксен стахановла бригади ĕçлет. Çав бригада колхоза 1500 кубометр вăрман хатĕрлеме панă задание çур уйăх хушшинче тултарма обязательство илнĕ. Бригада членĕсем халĕ пĕр-пĕринпе ăмăртса стахановла ĕçлеççĕ. П. Шаров, П. Николаев, А. Сорокин тата ытти комсомолецсем кулленхи задание 150—200 процент тултараççĕ.

М. Степанов юлташ пуçарса пынипе бригадăра тăтăшах «Боевой листок» тухса тăрать.

И. МАКАРОВ.

ВЛКСМ Обкомĕнче

Нумай пулмасть ВЛКСМ Чăваш Обком бюровĕ комсомол организацийĕсем çуркунне тата çуллахи вăхăтра çарпа физкультура енĕпе тумалли массăллă мероприятисен планне çирĕплетрĕ.

Çав план тăрăх, бюро апрелĕн 5-мĕшĕпе 20-мĕш хушшинче граната ывăтассипе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен республикăри заочнăй ăмăртăвне ирттерме йышăнчĕ. ВЛКСМ райком секретарĕсене, физкультурăпа спортăн районсенчи инспекторĕсене мартăн 20-мĕшĕнчен ăмăрту пуласси çинчен комсомолăн тата физкультурăн пуçламăш организацийĕсене пĕлтерме, унтан командăсене уйăрса, тренировка ĕçне пуçăнма хушрĕ.

Граната ывăтас енĕпе иртекен республикăри заочнăй ăмăртăвăн положенийĕ

Ку ăмăрту гранатăна ывăтма вĕренес тĕллевпе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене ытларах явăçтарас тĕллевпе иртет. Çав вăхăтрах вĕсем ГТО комплексĕн нормине параççĕ.

Ăмăрту апрелĕн 5-мĕшĕпе 20-мĕш хушшинче пуçламăш организацисенче пулать. Ăмăртăва 14 çултан иртнĕ çамрăксем пурте хутшăнма пултараççĕ. Командăсем, арçынсен те хĕрарăмсен те, 5 çынран тăраççĕ. Командăсем темĕн чухлех пулма пултараççĕ. Анчах командăри çынсем пурте пулсан тин командăна ăмăртăва кĕртеççĕ. Командăри çынсем гранатăна виçĕ тĕрлĕ ывăтаççĕ:

1. Гранатăна инçене ывăтассипе ГТО тата БГТО комплексĕн нормисем пулаççĕ.

2. Гранатăна чĕркуçленсе ларса «окопа» ывăтмалла. Окопăн сарлакăшĕ 1 метр, тăршшĕ 10 метр пулмалла. «Окопне» линисемпе, планкăсемпе тума юрать, чавсах тусан тата аванрах.

Планкăпа «окопăн» малтанхи линийĕ хушшинче арçынсем валли 25 метр, хĕрарăмсем валли—13 метр, çамрăк ачасем валли—13 метр, çамрăк хĕрачасем валли—10 метр пулмалла, вĕсене кашнине 3 граната памалла.

«Окопа» кашни тĕрĕс лекнĕ граната 20 очко шутланать.

3. 5 гранатăна çыхса танк çине ывăтмалла. Танк вырăнне урлăшĕ 2 метрлă, çÿллĕшĕ пĕр метрлă щита çĕртен пĕр метр кăларса лартма юрать.

Ывăтмалли планкăпа танк хушшинче арçынсем валли 15—20 метр, хĕрарăмсем валли—12 метр, çамрăк ачасем валли 12 метр, çамрăк хĕрачасем валли 8 метр пулмалла. Кашнине çывхăн лапала тултарнă 3 бутылка памалла. Танка тĕрĕс лектерсен, кашни ывăтни 20 очко шутланать.

Гранатăсем çарти пек (вĕренмелли) пулмалла, вĕсем арçынсем, хĕрарăмсем, çамрăк арçын ачасем валли 700 грамм, çамрăк хĕрачасем валли 500 грамм туртмалла.

Гранатăна виçĕ тĕрлĕ ывăтнă чухне те çакăн пек тăхăнмалла: арçынсен—винтовка (вĕренмелли), противогаз, 3 граната хунă сумка; хĕрарăмсен—противогаз, санитарнăй сумка, 3 граната хунă сумка пулмалла.

Хăш пуçламăш организаци мала тухнине предприятири е учреждениери мĕнпур ĕçлекенсенчен миçе процентĕ, пуçламăш организацинчи комсомолецсен шутĕнчен миçе процентĕ ăмăртăва хутшăннине шутлаççĕ. Ăмăртура пулнисенчен миçе процентĕ 1-мĕш сыпăклă ГТО, II-мĕш сыпăклă ГТО, БГТО нормисене панине шута илеççĕ.

Ăмăртăва ирттерме вырăнсенче судьясен коллегине суйламалла, вĕсене физкультурăпа спортăн райинспекторĕ çирĕплетме тивĕçлĕ.

Ăмăрту мĕнле иртни çинчен пуçламăш организацисем райкомсене, ВЛКСМ райком секретарĕсем обкома тата физкультурăпа спортăн ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитетне пĕлтереççĕ.

Районри Советăн сессийĕ

СОВЕТСКОЕ. (Телефонпа). Мартăн 18-мĕшĕнче районри Советăн 9-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе кăçалхи çуракине хатĕрленесси çинчен сÿтсе-явса тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Иртнĕ ялхуçалăх çулне районри колхозсем пысăк ÿсĕмсем тунипе вĕçлерĕç. Вĕсен тĕп ĕçĕ çĕршывпа фронт валли ытларах та ытларах тырпул, апкакай туса парасси пулчĕ. 17 колхоз тĕштырăсем туса илес плана ирттерсе пурнăçланă. Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленисем хушшинче уйрăмăнах «Машина», «Первое Мая», «За коммунизм», «Сеятель», «Крестьянская газета» тата ытти колхозсем палăрса тăраççĕ. Вĕсем кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илнĕ тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă.

Сесси районра çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пулса пынине уççăн палăртрĕ. Районра лайăх ĕçлекен колхозсем сахал мар. Сăмахран, «Сеятель», Молотов ячĕпе тăракан, «Крестьянская газета», «За коммунизм» колхозсем çуракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Вĕсен вăрлăхсем çителĕклĕ, машинăсемпе инвентарьсем юсавлă, ĕç вăйĕсене план тăрăх вырнаçтарса тухнă.

Анчах çуракине хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем нумай-ха. Вăрлăх фончĕсем хывассине районĕпе пурĕ 89 процент кăна пурнăçланă. Çавăн пекех вăрлăхсене тасатассине те тивĕçлипе йĕркелемен. Колхозсенче клевер, кантăр çĕрулми вăрлăхĕсем çитменни палăрать.

«Добролет», «Ядро», «Смычка» колхозсем çуракине тухма питех те начар хатĕрленеççĕ. Асăннă колхозсем çителĕклĕ таран вăрлăхсем уйăрса хурайман, вĕсене сортлассине, вырăнти удобренисене пухассине кирлĕ пек йĕркелемен. Кунашкал çитменлĕхсем районра татах та пур.

Сесси çуракине большевикла хатĕрленсе кĕтсе илес тĕлĕшпе паха та усăллă кăтартусем пачĕ.

Я. СИГАЕВ.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЧИ ШКУЛСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ÇĔРПУ. Пирĕн тăван Хĕрлĕ Çар гитлерла бандитсен кĕтĕвĕсене пĕрсе хĕвеланăçнелле хăвалать. Тăшман пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă районсенче ерипенех пурнăç чĕрĕлсе йĕркене кĕрсе пырать. Пирĕн миçетри тылра пурăнакансен тивĕçлĕхĕ—çав тин çеç ирĕке тухнă районсенчи халăха пур майпа та çĕнĕрен ура çине тăма пулăшасси пулать.

Хурлăх тÿснĕ вĕренекен ачасене тата шкулсене пулăшас майпа Çĕрпÿри педучилище коллективĕ шкулта вĕренмелли кĕнекесем тата тĕрлĕрен пособисем пухать. Преподавательсемпе вĕренекенсем 18 тĕслĕ учебник—мĕнпурĕ 350 кĕнеке ытла, 30 карандаш, тетрадьсем, циркульсем, линейкăсем т. ыт. те пухрĕç. Пухнă япаласене посылкăсем туса яраççĕ.

П. ШООР.

Лондонра В. И. Ленин 1902-1903 çулсенче пурăннă çурт çумне мемориальнăй хăма çакнă

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). Мартăн 15-мĕшĕнче Лондон муниципалитечĕн совечĕ тата Финсбери муниципалитечĕн совечĕн пуçарăвĕпе Лондонра Холфордс-скверăн 30 №-лĕ çурчĕ çумне, В. И. Ленин 1902—1903 çулсенче пурăннă çурт çумне, мемориальнăй хăма çакнă. Çав хăма çине çакăн пек çырнă: «Владимир Ильич Ульянов — Ленин (1870—1924), ССР Союзне тăвакане — çакăнта 1902—1903 çулсенче пурăннă».

Муниципалитет çурчĕ патĕнчен Холфордс-сквер патнелле темиçе пин çынлă халăх ушкăнĕ тапранса кайнă, вăл урам тăршшĕпе пĕр миля та ытла тăсăлнă. Процесси умĕнче Англи çарĕн пĕр полкĕн оркестрĕ пынă. Урампа пыракан халăх Совет Союзĕн тата Англин ялавĕсемпе илемлетнĕ пĕр пысăках мар çурт умĕнче чарăннă. Малтанрах нимĕçсем çак çуртăн иккĕмĕш хутне бомба пăрахса ишсе антарнă пулнă. Пĕрремĕш хутри икĕ пÿлĕмĕ, В. И Ленин пурăннă пÿлĕмсем кăна арканмасăр тăрса юлнă. «Аслă çулпуçа асăнса чысланă май», Финсбери мэрĕ Дрейк мемориальнăй хăма çакнă çĕре пынă Майский юлташа, Совет Союзĕн Англири посолне, ăшшăн саламланă. Лондон муниципалитечĕн совечĕн представителĕ Блейк, мемориальнăй хăма çакнă çĕре муниципалитет совечĕн комитечĕн пур представителĕсемпе те пĕрле килнĕскер, çакăн пек сăмах каланă: «Кунта Ленин ахаль гражданин пек пурăннă, пирĕн чĕлхене тата литературăна вĕреннĕ. Вырăс халăхĕшĕн çак вырăн таса вырăн. Вырăс халăхĕн паттăрла ĕçĕсем пире хавхалантараççĕ, çав ĕçсем Ленина пула кăна пулма пултарнă».

Совет Союзĕн Англири посолĕ Майский юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: аслăран та аслă гениссенчен пĕрне асăнса мемориальнăй хăма çакни вăл Совет Союзĕпе Англи хушшинче çывăх туслăх пуррине, хамăрăн пурсăмăр та курайман тăшмана çĕнтерме кирлĕ туслăх тата вăрçă иртсен икĕ çĕршыва пĕр-пĕринпе тата ытларах çывăхлатакан туслăх пуррине пĕлтерет, — тенĕ.

Италин шалти лару-тăрăвĕ питĕ йывăрланса çитнĕ

ЖЕНЕВА, мартăн 18-мĕш. (ТАСС). Италирен унта экономикăпа политика тĕлĕшĕнчен шалти лару-тăрусем татах та ытларах йывăрланса кайни çинчен пĕлтереççĕ. Итали халăхĕ выçăхмаллипех выçăхать. Мартăн 14-мĕшĕнче правительство мартăн 16-мĕшĕнчен пуçласа çăкăр паекне пĕр çын пуçне кунне 200 грамран 150 грама çити чакарасси çинчен приказ кăларнă. Çакă вăл Итали халăхĕшĕн çĕнĕ «жертва» пулса тăнине Италин Стефани агентстви хăй те пытарма пултараймасть, анчах та итальянецсене «лăплантарас» шутпа агентство намăса пĕлмесĕр çапла пĕлтерет: «Итали пек чухăн çĕршывра халăх пур тĕрлĕ инкек-синкеке те тÿссе ирттерме хăнăхнă», тет.

Итали халăхĕн продовольстви тĕлĕшпе пурнăçĕ кунран кун ытларах йывăрланса пынин чăн-чăн сăлтавĕсене вăрçă пирки пулса тăнă лару-тăрура мар шырамалла, çав сăлтавсене пуринчен ытларах Италин гитлерла «союзникĕсем» Италин çĕршывне çаратнинче шырамалла. Гитлерла «союзниксем» Италирен продовольствин мĕнпур ресурсĕсене туртса илсе Германие ăсатаççĕ. Çакăн çинчен Италин тулашри суту-илÿ министрĕ Риккарди уççăнах каланă. Мартăн 14-мĕшĕнче Италипе Германи пĕр-пĕринпе «экономикăллă килĕшÿ» туни çинчен сăмах хускатса, Риккарди уççăнах çапла йышăннă: «Итали халăхĕшĕн ытлашши кирлех мар пулса тăракан» мĕнпур продовольстви таварĕсене Германие ăсатмалла пулать, — тенĕ вăл.

Выçă аптăранипе пĕрлех, Италири халăх налогсем тĕлĕшпе те йывăр пусмăр тÿсет. Февраль уйăхĕн вĕçĕнче Итали министрĕсен совечĕ Италире июлĕн 1-мĕшĕнче пуçланакан 1942—43-мĕш финанс çулĕ валли государство бюджетне çирĕплетнĕ. Çав бюджетра расход пайне 43.800 миллион лирлăх, доход пайне 35.400 миллион лирлăх палăртнă. Çĕршывра финанс тĕлĕшпе тухса тăнă пысăк йывăрлăхсем пĕтĕмпех ĕççынисем çине тиенеççĕ. Вăрçă расхочĕсем пирки пулса тăнă бюджетри дефицита витес тесе фашистла влаçсем халăх çине, уйрăмах хресченсем çине, хуракан налогсене ÿстерсе янă. «Иль Солэ» хаçат нумаях пулмасть çапла йышăннă: «Питех те шел пулин те, налогсене çĕнĕрен ÿстерни хресченсене-арендаторсене çĕнĕрен пырса çапни пулать», — тенĕ.

Италин çĕршер пин салтакĕсем тĕрлĕ çĕршывсенче тыткăнра пурăнаççĕ. Итали рабочийĕсене çур миллион çынна яхăн ирĕксĕрлесе Германие ăсатнă, унта вĕсем хăрушла условисенче ĕçлеççĕ; итальянецсенчен тата тепĕр çур миллионĕ питех те ирсĕр ĕçе — Югославипе Греци патриочĕсене лăплантарас ĕçе туса пыраççĕ.

Итали çарĕн чаçĕсем, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тăраканскерсем, Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнипе питĕ пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Анчах çапах та Гитлер Муссолинирен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне Итали войскисен çĕнĕ контингенчĕсене яма ыйтать, çавăн пекех тата Италин 300 пин рабочине Германие ăсатма хушать, — унта итальянецсен фронта мобилизациленĕ нимĕçсем вырăнне ĕçе тăмалла. Германие Италирен рабочисем ăсатасси пирки çак кунсенче экономикăллă çĕнĕ килĕшÿ тунă.

Фронтра питех те пысăк çухатусем тÿсни, çĕршывра выçлăх ÿссе пыни тата гитлерла йыткĕтĕвĕсем çĕршывăн хуçалăхпа политикăллă пурнăçĕн мĕнпур кĕтессисенче иртĕхсе кайсах хуçаланни Итали халăхне пĕтĕмпех тарăхтарса çитернĕ. Фашистсен «Лаворо фашиста» хаçачĕн нумаях пулмасть ирĕксĕрех çапла йышăнма лекнĕ: «Фашистсем пуç пулса тăнине хирĕç уйрăм çынсем кăна мар, халăхăн пысăк ушкăнĕсем те çĕкленме пăхаççĕ», тенĕ хаçат. Çакă вăл, урăхла каласан, халăх фашистла йĕркене хирĕç тăнине пĕлтерет. Вăрçа пула ывăнса çитни тата мир çинчен калаçасси Италире питех те анлăн сарăлса кайнă, çавна пула Муссолинин хăйĕн юлашки статьине ирĕксĕрех хăратакан сăмахсемпе — «Калхалĕ мир çинчен ĕмĕтленет, çавă тăшмана пулăшать» текен сăмахсемпе пусарма лекнĕ.

Японецсен Гонконгри ирсĕр ĕçĕсем çинчен

Англи правительстви Япони çарĕ Гонконгра пурăнакан халăха тата Англин тыткăна лекнĕ салтакĕсене асаплантарни çинчен официальнăй заявлени тунă. Заявленире çаксене палăртнă: Англи çарĕн офицерĕсемпе салтакĕсене 50 çынна, аллисене те урисене те çыхса, штыкпа чиксе пăрахнă. Хĕрарăмсене ирĕксĕрлесе пусмăрланă та вĕлерсе вĕлерсе пăрахнă. Хулан китаецсем пурăннă пайĕнчи районран пĕтĕмпех ашкăну вырăнĕ туса хунă. Гарнизон составĕнчен чĕрĕ юлнисене пурне те лагере ăсатнă. (ТАСС).

Гитлеровецсем Польшăри рабочисене каторгăри ĕçе янă

СТОКГОЛЬМ, мартăн 17-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Польшăри рабочисене нумайĕшне генерал-губернаторствăран, «ĕçлеме тухман тата дисциплинăна пăснă» тесе, каторгăри ĕçе янă. Германи влаçĕсем малашне «Германи влаçĕсен приказĕсене пăртак та пулин пăхăнманни палăрсанах» Польшăри рабочисемпе служащисене каторгăри ĕçе ямалла тесе пĕлтернĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Отдел подготовки кадров
ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТО-БУМАЖНОЙ ФАБРИКИ
с 15 марта по 15 апреля 1942 г.
производит прием
НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ И ПЕРЕПОДГОТОВКИ
рабочих следующих профессий:

1. Ватерщицы,
2. Лепточницы-трепальщицы,
3. Ткачи,
4. Мотальщицы,
5. Проборщицы,
6. Токари,
7. Слесари,
8. Электромонтеры,
9. Ремонтировщики,
10. Электросварщики,
11. Помощники мастеров.

Срок подготовки по сокращенным программам от 1 до 3 месяцев.

Курсанты обеспечиваются:
1. Зарплатой,
2. Хлебными карточками,
3. Питанием через фабричную столовую и фабричный ларек.

За всеми справками по вопросам приема на курсы обращаться в отдел кадров фабрики (ул. Карла Маркса, 20) ежедневно с 9 до 18 часов, кроме выходных дней.
2—1

Чебоксарской хлопчато-бумажной фабрике срочно требуются:

1. Трепальщики
2. Лепточницы
3. Банкаброшницы
4. Ватерщицы и с"емщицы
5. Мотальщицы
6. Шлихтовальщики
7. Ткачи
8. Слесари
9. Токари
10. Водопроводчики
11. Шорники
12. Баташики
13. Женщины и мужчины на переквалификацию по специальностям прядильной и ткацкой фабрики.

Снабжением рабочие обеспечиваются через столовую и ларек фабрики.

Оплата труда—сдельная.

С предложениями обращаться в отдел кадров фабрики по адресу: ул Карла Маркса, 20.
2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн -26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, [illegible]тельство конторин — 0—23.

НТ 682 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: